22-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942 апрель 1 юнкун 76(6101) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ.

Тимӗр-тӑмӑр пухасси— ответлӑ та пысӑк ӗç

Вӑрçӑ питӗ те нумай самолетсем, танксем, тупӑсем тата ытти хӗç-пӑшалсем ыйтать. Вӗсене пурне те металран тӑваççӗ. Халӑхӑн вӑхӑтра пӗр пӗчӗкленне те металсӑр пӗрре тума çук. Çавӑнпа та металл пире çӑкӑр пекех, сывлӑш пекех, шыв пекех кирлӗ.

Металл кашни заводрах, кашни колхозрах пур. Ура айӗнче саплалса тата тутӑхса выртакан тимӗр-тӑмӑр нумай. Ӑна пухса домнӑсене мартенсене пӑрахса хӑларсан, питӗ лайӑх пахалӑхлӑ хурçӑ пулать. Ахальрен мар ӗнтӗ тимӗр-тӑмӑра — стратегилле чӗртавар вырӑнне, ӑна пухассине — оборонӑллӑ ӗç вырӑнне хурса хаклаççӗ.

Анчах пирӗн республикӑра çак кирлӗ ӗç çине çителӗксӗр çавӑрӑнса пӑхаççӗ-ха. Республика иртнӗ çулта тимӗр-тӑмӑр пухмалли плана тултараймарӗ. Ӗçе вӑйлатмалла пулнӑ, анчах вӑл халӗ те çителӗксӗр пырать. Январьпе февраль уйӑхӗсенче республикӑра тимӗр-тӑмӑр пухас ӗç тӗлӗшпе темисемӗ, мартра çеç ӗçе тытӑннӑ. Çавӑнпа ӗнтӗ пӗрремӗш кварталти планне пӗтӗмпе 26 процент çеç тултарнӑ.

Тимӗр-тӑмӑр пухас тӗлӗшпе куллен ӗçлеме тивӗçлӗ организацисем пур. Вӗсен задачи—ӗçсыннисене тимӗр-тӑмӑр пухма мобилизацилесси, пухнине вӑхӑтра йышӑнса тӑрасси. Халӗ вӗсен хӑш-пӗрисем хӑйсен задачине çителӗксӗр пурнӑçласа пыраççӗ-ха. Союзутиль Шупашкарти отделенийӗ, сӑмахран, пӗрремӗш кварталта 65 тонна тимӗр-тӑмӑр пухас вырӑнне 20 тонна çеç пухнӑ. Промсоюзпа потребсоюз тимӗр-тӑмӑр пухассипе çителӗксӗр интересленеççӗ. Промсоюз иртнӗ кварталта тимӗр-тӑмӑр пухса памалли плана 38 процент ытларах, потребсоюз 34 процент çеç тултарнӑ. Çак вӑхӑтрах вӗсен районсенчи ӗçлекенсем тимӗр-тӑмӑр пухассине ответлӑ ӗç вырӑнне хуман. Çапах та парти организацисем, промартельсемпе потребсоюз организацийӗсенче ӗçлекенсем тимӗр-тӑмӑр пухассине вӑйлатма тивӗçлӗ.

Райсоветсемпе партин район комитечӗсем пӗрремӗш кварталти тимӗр-тӑмӑр пухас плана пурнӑçламан районсенче ӗçе вӑйлатмалла. Элӗк, Ишлей, Хӗрлӗ Чутай, Çӗрпӳ, Куславкка, Шупашкар тата ытти районсенче пӗр-ик процент çеç тултарнӑ.

Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ тимӗр-тӑмӑр пухас ӗçе вӑйлатма хушса районсене организацисене çирӗп катарту пачӗ. Çавна май Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ 1942 çулти мартӑн 6-мӗшӗнче тимӗр-тӑмӑр пухасси çинчен ятарласа постановлени йышӑнчӗç. Вӑл постановлени тӑрӑх, тимӗр-тӑмӑр пухас ӗçшӗн хула совечӗсемпе район совечӗсен исполком председателӗсем, парти горкомӗсемпе райкомӗсен секретарӗсем ответлӑ пулса тӑраççӗ. Кашни района халь тимӗр-тӑмӑр пухмалли çирӗп план туса панӑ. Вӑл плана государствӑн пысӑк заданийӗ вырӑнне хурса, ӑнӑçлӑн пурнӑçлас пулать. Партипе совет организацисем план пурнӑçа мӗнле кӗрсе пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑма тивӗçлӗ. Пухнӑ тимӗре чугун çулпа шывçул станцийӗсем патне турттарса тухнӑ чух вырӑнти туртӑм вӑйӗсемпе усӑ курмалла. Чугунçул работникӗсен ӑна тиеме вагонсем вӑхӑтра тата çителӗклӗ таран парса тӑмалла.

Тимӗр-тӑмӑр пухас тӗлӗшпе пӗр вӑхӑтра комсомол организацийӗсем пысӑк ӗçсем туса ирттерчӗç. Канмалли кунсенче тӑтӑшах воскресниксене тухса, çӗршер тонна хура тата тӗслӗ металсем пухрӗç. Ку ӗçпе куллен интересленекенсем халӗ те ахаль лармаççӗ. Красноармейски районри комсомолецсем, сӑмахран, нумай пулмасть 11 тонна тимӗр-тӑмӑр пухса пачӗç, çак кунсенче татах 3 тонна пухнӑ. Ку районри Исаковӑри туллимар вӑтам шкулта вӗренекенсем тимӗр-тӑмӑр пухма кашни кун тухаççӗ.

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, апрелӗн 5-мӗшӗнче — çитес канмалли кун — комсомолецсемпе çамрӑксен тимӗр-тӑмӑр пухмалли воскресникӗ пулса иртет. Çак воскреснике рабочисемпе служащисене те, колхозниксемпе колхозницӑсене те анлӑн хутшӑнтарас пулать. Тимӗр-тӑмӑр пухни хӗçпӑшалсем туса хӑтларас ӗçе ӳстерме мӗн таран пулӑшнине çинчен вӗсене ӑнлантарса парас пулать.

Металл — çӗршывпа фронта куллен кирлӗ япала. Хуçалӑхра кирлӗ мар тимӗр-тӑмӑра пухассине анлӑн сарса ярар! Тӑван Хӗрлӗ Çара ытларах хӗçпӑшалсем памалла тӑвар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

Мартӑн 30-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Мартӑн 30-мӗшӗнче фронтра нимӗнле пысӑк улшӑнусемех те пулман.

Мартӑн 29-мӗшӗнче нимӗçсен 25 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 12 самолет пӗтнӗ.

* * *

Мартӑн 29 мӗшӗнче пирӗн авиаци чӑçӗсем нимӗçсен 5 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 64 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 30 ытла лашине, 10 полевой тата зенитнӑй орудине, 27 минометне, зенитнӑй пулеметсен 5 точкине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен 4 складне тата горючин пӗр складне сирпӗнтерсе янӑ, чугунçул çинчи тӗрлӗрен грузсем тиенӗ 17 вагона çӗмӗрсе тӑкнӑ.

* * *

Иртнӗ эрнере мартӑн 22-мӗшпе 28-мӗш хушшинче нимӗç авиацийӗ 161 самолет çухатнӑ. Çав вӑхӑт хушшинчех пирӗн 71 самолет пӗтнӗ.

* * *

Ленинград фронтӗн уйрӑм участокӗсенче кӗрешекен пирӗн чӑçсем, активлӑ операцисем туса пырса, противника чӗрӗ вӑйпа боевой техника тӗлӗшӗнчен пысӑк çухатусем кӳреççӗ. Юлашки икӗ кун хушшинче кӑна нимӗçсем хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсене, вилнисене шутласан кӑна, 2500 çын ытла çухатнӑ. Тыткӑна илнисем пур. Çапӑçусенче нимӗçсенне 4 танк, 8 оруди, 15 пулемет тата 2 наблюдательнӑй пункт пӗтерсе тӑкнӑ, 10 ДЗОТ-па блиндажа çӗмӗрнӗ. Тытса илнӗ трофейӗсем хушшинче: 19 оруди, 85 пулемет, 20 миномет, 2 огнемет, 24 автомат, 400 ытла винтовка, 223.000 винтовка патронӗсем, 900 снаряд, 1380 мина, 890 граната, 2 радиостанци, 3 бронемашина, 16 автомашина, 5 мотоцикл, куçса çӳрекен 2 кухня тата ытти тӗрлӗ çар пурлӑхӗсем.

* * *

Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн стрелковӑй часть тӑшман оборонин çирӗплетнӗ пунктне тытса илнӗ. Нимӗçсен темиçе çӗр салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ, халӗ вӗсене шута илеççӗ. Тепӗр участокра пирӗн артиллери нимӗçсен боеприпассен складне пӗтерсе тӑкнӑ, 2 танкне тата 2 орудине персе çӗмӗрнӗ.

* * *

Пирӗн сывлӑшри десантӑн подразделенийӗ 5 кун хушшинчи çапӑçусенче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 500 çынна пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Златоцветов юлташ командир пулса ертсе пыракан авиачасть (Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç фрончӗ) икӗ кун хушшинче тӑшманӑн 11 истребительне персе антарнӑ. Уйрӑмӑнах Минаев юлташӑн подразделенийӗнчи летчиксем палӑрнӑ, вӗсем пӗр кун хушшинче тӑшманӑн 5 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Рязанцев лейтенант çак кунсенче ручной пулеметран персе нимӗçсен бомбардировщикне ӳкернӗ. Вут хыпса илнӗ самолет çӗре ӳкнӗ.

* * *

Калинин облаçӗнчи К. тата Д. юлташсем командир пулса ертсе пыракан партизансен пӗрлешнӗ темиçе отрячӗ нимӗçсен хупӑрласа илнӗ вырӑнти гарнизонне пулӑшма каякан 591-мӗш пехотнӑй батальона кӗтмен çӗртен атакӑланӑ. Хаяр çапӑçура батальона аркатса тӑкнӑ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 300 çынна ытла вӗлернӗ. Партизансем 10 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассене сирпӗнтерсе янӑ, танксене хирӗç пемелли 2 оруди, 12 пулемет, нумай автоматсем тата ытти тӗрлӗ хӗçпӑшал тытса илнӗ.

* * *

Нимӗçсен 211-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 317-мӗш полкӗнчи 8-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Генрих Бордовк çапла каласа панӑ: «Икӗ эрне хушши пынӑ çапӑçусенче пирӗн полк 1000 çынна çити çухатрӗ. Чи пысӑк çухатусем 8-мӗш ротӑра пулчӗç, унта 220 çынран 90 çын кӑна юлчӗ. 5-мӗш рота 100 çынна çити çухатрӗ. Пирӗн дивизи Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрçӑ фронтӗнче икӗ уйӑха яхӑн тӑрать. Çав вӑхӑт хушшинче чӑçсенчен дезертир пулса тарнисем те пулнӑ. Пирӗн полкӑн 5-мӗш ротинчен ефрейтор Герберт Берсте тарнӑ. Вӑл йывӑр пулемета пӑрахнӑ та тыла таварӑннӑ. 307-мӗш полкӑн 8-мӗш ротинчен икӗ обер-ефрейтор тата икӗ стрелок наступление кайма килӗшмен, вӗсем пысӑк калибрлӑ пулемета пӑрахса малти позицисенчен тарнӑ. Пирӗн дивизин 3-мӗш полкӗнчи 7-мӗш ротӑн командирне Хакман лейтенанта лейтенант чинӗнчен кӑларса ахаль салтак турӗç, вара ӑна штрафной ротӑна ячӗç. Вӑл хӑй подразделенийӗнчи салтаксемпе пӗрле çапӑçу хирӗнчен тыла тарнӑ».

* * *

Финсен правительстви темиçе хутчен те Финляндири выçлӑх çинчен пӗлтерекен хыпарсене сирсе яма хӑтланчӗ. Анчах та, вырӑссен пословици калаççӗ, пӑшатасса михӗре пытарма çук. Мартӑн 28-мӗшӗнче финсен халӑх обеспечени министерстви халӑха официальнӑй йӗркепе çапла пӗлтернӗ: «Февраль уйӑхӗнче çӑкӑр илме панӑ карточкӑсем тӑрӑх çӑкӑр парайман, çав карточкӑсемпе кайран, пирӗн тырӑ запасӗсем пулсан, усӑ курма пулать». Çапла ӗнтӗ, финсен правительстви Финлянди халӑхӗ февральте илмелли çӑкӑран пӗчӗк пайне март уйӑхӗн вӗçӗнче те илеймени çинчен хӑех асӑрхамасӑр çӳпӗлтетсе панӑ.

Мартӑн 31-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Мартӑн 31-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле фронтра нимӗнле пысӑк улшӑнусемех те пулман.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗнчи участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн стрелковӑй часть вӑйлӑ çапӑçу хыççӑн тӑшманӑн оборона туса тӑмалли вырӑнне йышӑнса илнӗ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 500 çын ытла вилсе пӗтнӗ. Çакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 2 танк, икӗ оруди, 29 пулемет, танксене хирӗç пемелли икӗ пӑшал, 174 винтовка, 3.200 снаряд, 150 пин патрон, 1.600 мина, 3 радиостанци тата 10 пин метр телефон кабелӗ. Тыткӑна илнисем пур. Фронтӑн тепӗр участокӗнче пирӗн боецсем халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗçсенне 3 оруди, 20 ручной тата 4 станковӑй пулеметсем, 200 пин патрон тата ытти çар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Калинин фронтӗнчи участокӗсенчен пӗринче пирӗн кавалерин чаçӗ, гитлеровецсен вӑйлӑ атакине сирсе пӑрахса, контратака пуçласа янӑ. Çакӑнта нимӗçсен пехотине каялла сирсе пӑрахса, халӑх пурӑнакан кирлӗ пункта йышӑнса илнӗ. Çапӑçура нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсем 350 çын вилсе пӗтнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Нимӗçсем çирӗплетнӗ пӗр пунктшӑн пынӑ çапӑçура Ходоков старшинан танк экипажӗ тӑшмана виççӗ хутчен атакӑланӑ. Танкистсем, нимӗçсен укреплениине татса кӗрсе, виçӗ ДЗОТ-а тата пулеметсен виçӗ йӑвине пӗтерсе тӑкнӑ. Танкистсем пирӗн çӗмӗрӗлнӗ танка кӑкарнӑ та (çав танк противник вырнаçнӑ вырӑна юлнӑ пулнӑ) çапӑçу хирӗнчен илсе тухнӑ.

* * *

Разведчик-сапер Евсин юлташ питех те пысӑк хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑ. Вӑл противник хурса тухнӑ минӑсене тасатнӑ чухне нимӗçсен 67 фугасне пуçтарса илнӗ те противникӑн тылӗнчи çул çине ларта тухнӑ. Фугассем хурса тухнӑ вырӑн патне нимӗçсем çывхарнӑ чухне Евсин юлташ вӗсене сирпӗнтерсе янӑ. 26 гитлеровец сывлӑшпа çӗкленнӗ.

* * *

Сержант Белоус нимӗçсен пикировка тӑвакан бомбардировщикӗ çине винтовкӑран щеме тытӑннӑ та бомбардировщика персе антарнӑ.

* * *

Харьков партизанӗсен И. юлташ ертсе пыракан отрячӗ канава кӗрсе ларнӑ йывӑр танка кӑларма хӑтланакан нимӗçсен ушкӑнӗ çине пырса тапӑннӑ. Нимӗçсен танкисчӗсемпе саперӗсене вӗлерсе пӗтернӗ те партизансем танка сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Нимӗçсен 75-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 222-мӗш полкӑн 2-мӗш батальонӗн пулеметнӑй ротинчен тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Эрих Кеббель çапла каласа панӑ: «Пирӗн рота юлашки çапӑçусенче хӑйӗн личнӑй составӗн тӑватӑ пайран виççӗ пайне çухатрӗ. Вилнисем хушшинче 10 унтер-офицер тата 3 фельдфебель. Ротӑра 12 пулемет тата 6 миномет пулсаччӗ. Халӗ 4 пулемет тата 3 миномет анчах юлнӑ. Пирӗн батальонӑн стрелковӑй ротисем çынсем тӗлӗшпе татах та пысӑкрах çухатусем тӳсрӗç. 6-мӗш ротӑра пӗтӗмпе те 23 çын кӑна юлнӑ. 5-мӗш рота пуçӗпех пӗтсе ларнӑ».

* * *

Нимӗçсен обер-ефрейторӗ Гейнц Зиммель нумаях та пулмасть хӑйпе пӗрле пулнӑ салтах патне, халӗ Германири лазаретсенчен пӗринче выртакан скер патне, çапла çырнӑ: «Пирӗн вилнисемпе аманнисен шучӗ кунран куна ӳссе пырать. Лару-тӑру татах та хӑрушӑрах пулса тӑчӗ. Пирӗн машинӑсемпе орудисем вырӑссен аллине лекнӗ. Эпир хамӑр чи кирлӗ япаласене илтӗмӗр те 20 километр хушши тартӑмӑр. Ротӑра пӗр оруди тата 13 салтак анчах юлнӑ. Рота юлашкийӗсене урӑх чаçсене куçарнӑ. Мана арми штабӗн гаражӗнчи автобус çине шофер пулса ӗçлеме куçарчӗç. Эпӗ хама-хам питӗ начар туятӑп. Ревматизмпа хӗн куратӑп. Çапах уткатӑп-ха. Эсӗ çак тамӑкран çӑлӑннӑшӑн саван».

* * *

Германире ютçӗршывсенчи рабочисене ӗçукçи памалли çӗнӗ йӗрке тунӑ. Ютçӗршывсенчи рабочисене халӗ ӗçукçин 75 процентне кӑна параççӗ, юлашки 25 процентне «татӑклӑ расчет тӑвиччен» тесе тытса юлаççӗ. Çакӑн пек жуликла ӗçсемпе гитлеровецсем ютçӗршывсенчи рабочисене хӑйсен предприятийӗсенче пуçӗпех чура туса хума хӑтланаççӗ.

Чӑваш АСС Республикинчи колхозсем государствӑна обязательнӑй йӗркепе пахча-çимӗçсем тӑратмалли çулталӑкри нормӑсене районсем тӑрӑх палӑртса парасси çинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ 1942 çулти мартӑн 9-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленипе килӗшӳллӗн, Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ 1940 çулти июнӗн 7-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленире обязательнӑй йӗркепе государствӑна пахча-çимӗç тӑратас тӗлӗшпе палӑртнӑ нормӑсене улӑштарас майпа, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ çапла йышӑнаççӗ:

1. Чӑваш АСС Республикинче 1942 çултан пуçласа колхозсем государствӑна обязательнӑй йӗркепе пахча-çимӗçсем тӑратмалли çулталӑклӑх нормӑсене районсем тӑрӑх çакӑн пек çирӗплетсе парас:

Районсем	Пӗтӗмпе	Вӑл шутран				
		Купӑста	Кӑшман	Кишӗр	Сухан	Хӑяр
1. Улатӑр	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
2. Канаш	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
3. Шупашкар	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
4. Çӗмӗрле	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
5. Тӑвай	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
6. Вӑрнар	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
7. Йӗпреç	11,61,	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
8. Ишлей	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
9. Калинински	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
10. Куславкка	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
11. Хӗрлӗ Чутай	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
12. Кувакино	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
13. Сӗнтӗрвӑрри	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
14. Октябрьски	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
15. Пӑрачкав	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
16. Сӗнтӗр	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
17. Вӑрмар	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
18. Çӗрпӳ	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20,
19. Шӑхасан	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
20. Етӗрне	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
21. Элӗк	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
22. Комсомольски	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
23. Первомайски	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
24. Советски	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
25. Красноармейски	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
26. Чкаловски	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
27. Шӑмӑршӑ	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
28. Елчӗк	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—

2. Çакӑн пек йӗрке тӑвас: çулйӗртен инçетри районсенчи — Элӗк, Комсомольски, Первомайски, Советски, Красноармейски, Чкаловски, Шӑмӑршӑ тата Елчӗк районӗсенчи колхозсем, вӗсен обязательнӑй йӗркепе пахча-çимӗçсем тӑратмалла пулсан, çав районсем валли типӗтнӗ пахча-çимӗçсем тӑратас тӗлӗшпе палӑртса панӑ нормӑсем тӑрӑх, пахча-çимӗçсене хатӗрлев пункчӗсене типӗтсе параççӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. СОМОВ

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ И. ЧАРЫКОВ.

Молдави халӑхӗн представителӗсен митингӗ

Мартӑн 29-мӗшӗнче Мускавра Молдави халӑхӗн — Совет Союзӗнчи туслӑ халӑхсемпе пӗр тан правӑллӑ, пӗр тӑван халӑхӑн представителӗсен митингӗ пулса иртнӗ.

Митинга Молдави ССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ Федор Бровко уçнӑ.

— Хаклӑ тӑвансем! Молдави халӑхӗ хӑйне Румыни боярӗсемпе помещикӗсен пыткӑнӗнчен ирӗке кӑларнӑ аслӑ куна —1940 çулти июнӗн 28-мӗшне нихӑçан та асран ярас çук. Çав кун Совет Союзӗнчи халӑхсем пулӑшнипе Молдави халӑхӗн ӗмӗр-ӗмӗр ӗмӗтленнӗ ӗмӗчӗсем пурнӑçа кӗчӗç. Халӗ пирӗн çӗршыв хӗнхур айӗнче асапланать, Молдави халӑхне вӑрӑ-хурахсем ним юлмиччен çаратса тухрӗç, çавтери тискер асап кӑтартса тыткӑнра усраççӗ. Фашистла кашкӑрсем пирӗн халӑхӑн чи хаклӑ ӗмӗчӗсене таптаса лӳчӗркерӗç. Халӑхӑн ирӗклӗхӗпе телейне туртса илсе таптаса тӑкрӗç. Анчах ирӗклӗхе юратакан пирӗн халӑх нихӑçан та пуç усӑрса парӑнса тӑрас çук. Çитӗ вӑхӑт, час ак Молдави çийӗнче ирӗклӗх ялавӗ—хӗрлӗ ялав вӗлкӗшсе тӑрӗ.

Микрофон умӗнче Молдави композиторӗ Няги:

— Историре ирсӗр ӗçсем сахал мар пулнӑ, анчах вӗсем гитлерла варварсен ирсӗрлӗхӗсем патне яхӑнне те пыраймаççӗ. Нимӗçсемпе румын оккупанчӗсем вутпа та хӗçпе Молдави халӑхӗн национальнӑй культурине пӗтерсе пыраççӗ. Молдави халӑхӗн чи лайӑх ывӑл-хӗрӗсен юнӗ, арӑмсемпе аннесен куççулӗ, çунтарса янӑ çуртйӗрсем, килсем, тӑлӑха юлнӑ ачасем пире кӗрешӗве чӗнеççӗ, тӑшмана ниме шеллемесӗр таварма чӗнеççӗ.

Молдави комсомолӗн Центральнӑй Комитечӗн секретарӗ Вера Лашкул хуласемпе ялсен çамрӑкӗсене, совет çӗршывӗн çамрӑк патриочӗсене — партизансемпе партизанкӑсене ӑшшӑн саламланӑ.

— Гитлерпа унӑн йытти Антонеску,— тенӗ вӑл,—çамрӑксен советлӑ Молдавире тупнӑ ирӗклӗ те савӑнӑçлӑ пурнӑçне туртса илчӗç. Хӗçпе те пӑшалпа хӑратса, вӗсем Молдави ывӑлӗсемпе хӗрӗсене хӑйсен чури туса хураççӗ. Молдави халӑхӗн çамрӑк ывӑлӗсемпе хӗрӗсем фашистла вӑрӑ-хурахсене чунтан курайманççӗ, вӗсен ӑшӗнче тавӑру вучӗ ялкӑшса çунать.—Пӗтӗм вӑя тӑшмана аркатнӑ çӗре,—тесе вӗçленӗ хӑйӗн сӑмахне оратор.

Боецсен, командирсен тата Хӗрлӗ Çарӑн политработникӗсен—Молдави халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗсен ячӗпе артиллерин старши сержанчӗ Е. А. Иордатий сӑмах тухса каланӑ.

— Эпир,—тенӗ вӑл,—тӑватӑ тӑван. Вӑрçӑ пуçланиччен эпир пурте колхозра ӗçлеттӗмӗр, мирлӗ пурнӑçпа пурӑнаттӑмӑр. Халӗ тӑватсӑмӑр та Хӗрлӗ Çар ретӗнче, фашистсене хирӗç кӗрешетпӗр. Фашистла ирсӗр йытӑсене эпир Ростов патӗнче те, Лозовая, Барвенково патӗнче те çапнӑ, ытти çӗрте те çапатпӑр.

Митингра тата çаксем тухса сӑмах каланӑ: рабочи Д. Руссу, писатель Иоан Чьобану, Молдави поэчӗ Буков, вырӑс писателӗ Н. Тихонов.

Митингра пулнисем калама çук хавасланса Сталин юлташ патне салам яма йышӑннӑ тата Молдави халӑхне чӗнсе çыру çырнӑ. Молдави халӑхӗн представителӗсен митингне радио тӑрӑх панӑ. (ТАСС).

Хӗрлӗ Çарӑн сывлӑш-çар вӑйӗсен начальствующи тата рядовой составне орденсемпе тата медальсемпе наградӑлани

Нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн тата çак ӗçре хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх наградӑланӑ:

Ленин орденӗпе — старши лейтенанта **М. Н. Алексеева**, старши политрука **М. П. Белова**, подполковника **В. В. Бицкие**, капитана **А. Я. Вавилова** тата ыттисене те, мӗн пурӗ 17 çынна.

Хӗрлӗ Ялав орденӗпе — 67 çынна;

Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗпе — 54 çынна;

«За отвагу» медальпе — 22 çынна;

«За боевые заслуги» медальпе — 17 çынна наградӑланӑ. (ТАСС).

ТИМӖР-ТӐМӐР ЭШЕЛОНӖ

Хабаровск крайӗнчи ӗçсыннисем металран тунӑ япаласен ванчӑкӗсене çине тӑрсах пухаççӗ. Предприятисенче, стройкӑсенче, колхозсемпе совхозсенче, МТС-сенче тата халӑх хушшинче çавӑн пек ванчӑксене 11.427 тонна пуçтарнӑ та ӗнтӗ.

Çитес кунсенче Хабаровск станцинчен ятарласа металл ванчӑкӗсем тиенӗ эшелон тухса каять. Çав эшелон вӑл—Хабаровск крайӗнчи комсомолецсемпе çамрӑксем тӑван çӗршывӑн металлурги промышленноçне паракан парне пулса тӑрать. (ТАСС).

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн хисеплӗ грамотисене пани

Советсен çурчӗн залӗнче госпитальсенче кӑтартуллӑ ӗçлекен работниксене тата строительство ӗçӗсен активлӑ участникӗсене Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн хисеплӗ грамотисене пачӗç.

Хӗрлӗ хӑмачпа витнӗ сӗтел умне малтан старши медсестра Таисия Михайловна Беляева тухать. Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн председателӗ З. А. Андреева юлташ Беляевӑна хӗрлӗ кӗнеке — хисеплӗ грамота тыттарса, унӑн аллине хыттӑн чӑмӑртать.

Унтан хисеплӗ грамотӑна военком В. П. Флягин, госпиталь начальникӗ В. Г. Ефимова, врач И. З. Валк, шеф-повар Малинич тата ытти юлташсем те илеççӗ.

Хисеплӗ грамота илнисем хушшинче уйрӑмӑнах строительство ӗçӗнче активлӑн ӗçлесе хӑйсене палӑртнӑ колхозниксем, инженерсемпе техниксем, партипе совет работникӗсем нумай: Сӗнтӗр райсовет исполкомӗн председателӗ М. Н. Угольников, ВКП(б) Ишлей райкомӗн секретарӗ П. С. Сидоров, ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Хасьянов, Шупашкар районӗнчи Войков ячӗпе тӑракан колхоз членӗ В. А. Алексеева, Чӑваш АССР Шалти Ӗçсен Халӑх Комиссариачӗн ответлӑ работникӗсем С. М. Андреев, И. Т. Козлов, Я. Н. Никитин юлташсем.

— Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн хисеплӗ грамотине парса пӗтернӗ хыççӑн З. А. Андреева юлташ кӗске те ӑшӑ сӑмах каларӗ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл госпитальсенче ӗçлекен работниксемпе строительство ӗçӗсен участникӗсене чаплӑ награда—хисеплӗ грамота илнӗ ятпа саламларӗ, малашнехи ӗçсенче татах та пысӑкрах çитӗнӳсем тума ырӑ сунчӗ.

Украинӑри Коммунистсен (большевиксен) партин Харьков обкомӗн пленумӗ

ХАРЬКОВ облаçӗ, мартӑн 29-мӗш. (ТАСС). Фронт çывӑхӗнчи хулара Украинӑри Коммунистсен (большевиксен) Партин Харьков обкомӗн черетлӗ пленумӗ пулса иртнӗ.

— Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ пынӑ кунсенче,—тенӗ докладчик, — облаçри ӗçсыннисем хӑйсем çирӗп пулнине, Ленинла-Сталинла партие чунтан юратса тӑнине уççӑнах палӑртрӗç.

Паттӑр Хӗрлӗ Çар облаçри районсене чылайӗшне ирӗке кӑларчӗ. Докладчик çав районсенче хуçалӑха çӗнӗрен юсама тытӑнни çинчен калать. МТС-сем, совхозсем, колхозсем çуракине хатӗрленеççӗ. Пӗр гектар çӗр те акмасӑр ан юлтӑр — çакӑн пек ӗнтӗ çитес çуркуннен лозунгӗ.

Пленум хупӑнас умӗн Украинӑри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральнӑй Комитечӗн секретарӗ Воротченко тата УССР Совнаркомӗн председателӗн заместителӗ Старченко юлташсем сӑмах тухса каланӑ.

Хӗвеланӑç фрончӗн боецӗсем валли Май уявӗ умӗнхи кучченеçсем

Мартӑн 29-мӗшӗнче Мускава пӗр эшелон кучченеç çитрӗ. Ӑна Хӗвеланӑç фрончӗн боецӗсем валли Алтай крайӗнчи ӗçсыннисем янӑ. Эшелонра мӗнпурӗ 18 вагон. Ку вагонсенче аш-какай, çӗпӗр пелменӗсем, кайӑк-кӗшӗк ашӗ, çу— Алтай крайӗ мӗнпе пуян, çав пурте пур эшелонри вагонсенче. Хӑйне уйрӑм хатӗрленӗ 6.000 посылка, тӗрлӗрен эрехсем эшелонра темиçе вагон йышӑнаççӗ.

Çав кучченеçсене пухнӑ çӗре крайри чи инçетре ларакан колхозсем те хутшӑннӑ. Эшелон тухса кайиччен ӗлкӗрес тесе, Каменски районри колхозниксем кучченеçсем хатӗрлесе васкасах çуналлӑ обоз организациленӗ. Хӗллехи асар-писер çил-тӑмансене пӑхмасӑр, вӗсем кӗске вӑхӑтрах 250 километр тунӑ, эшелон тухса каймалли станцие шӑп та лӑп кӑтартса панӑ вӑхӑта пырса çитнӗ.

Алтаецсен кучченеçӗсене фронта делегаци илсе каять. Делегацире Алтай крайӗнчи рабочисен, колхозниксен тата железнодорожниксен представителӗсем. Вӗсем хӑйсемпе пӗрле «Алтайская правда» хаçатӑн ятарласа кӑларнӑ номерне—хаçат-çыру илсе килнӗ. Унӑн страницисем çинче алтаецсем боецсене хӑйсем мӗнле ӗçлени çинчен: унти предприятисемпе колхозсем фронта хӗçпӑшал, продовольстви мӗнле парса тӑни çинчен, хуласемпе ялсенче красноармеецсен çемйисене мӗнле пулӑшса тӑни çинчен—отчет параççӗ. Çак номерӗн пӗтӗм тиражне вӗсем Хӗвеланӑç фрончӗн чаçӗсенче валеçеççӗ. (ТАСС).

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Смоленск облаçĕн тата тепĕр районне нимĕçсенчен тасатнă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, мартăн 29-мĕш. (ТАСС). Темиçе кун каярах, Н-ски соединени нимĕçсен çирĕплетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕччĕ. Çав наступление малалла сарса пырса, пирĕн подразделенисем мартăн 27-мĕшпе 28-мĕш числисенче кăна халăх пурăнакан татах 20 пункта йышăнса илчĕç. Çапла вĕсем Смоленск облаçĕн татах тепĕр районне нимĕç оккупанчĕсенчен тасатса ирĕке кăларчĕç. Фашистсем йывăр çухатусем тӳсеççĕ. Пирĕн пĕр танковăй подразделени кăна 10 кун хушшинче нимĕçсен 1500 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ тата 14 танкне, артиллерин 4 батарейине, минометсен 9 батарейине, тĕрлĕ калибрлă 34 орудине, 44 ДЗОТ-не, 19 станковăй тата 27 ручной пулемечĕсене пĕтерсе тăкнă.

Германин тылĕнче пессимизм вăйлансах пырать

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, мартăн 30-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Нимĕç салтакĕсем хăйсен ирĕкĕпе ытларах та ытларах тыткăна парăнаççĕ. Тыткăна парăнакансем хушшинче резервист-салтаксем нумай. Вĕсене Германире нумаях пулмасть мобилизациленĕ те нимĕн вĕрентсе тăмасăрах фронта ăсатнă. Вĕсем пурте пĕр сасăпах тенĕ пек Германи халăхĕ çĕнтерĕве ĕненме пăрахса, ытларах та ытларах тарăхма тытăнни çинчен, пессимизм ӳссе вăйлăлансах пыни çинчен калаççĕ.

Акă мĕн калаcа парать, сăмахран, 17-мĕш танковăй дивизин 40-мĕш полкĕнчи салтак, баварец Людвиг Хангельбергер (хăйне мобилизациличчен вăл Новый Ульм ятлă хулара, пĕр фабрикăра ĕçленĕ пулнă):

— Германире пысăк траур. Çынсем пурте хуйхăрса, тарăхса пурăнаççĕ. Кашни утăмрах аманнă, суранланнă çынсем курăнаççĕ. Аманнисем çавтери нумаййипе вĕсене госпитальсене те вырнаçтарса ситерейменççĕ. Çавăнпа та вĕсенчен чылайĕшĕсем уйрăм хуçасем патĕнче хваттерте пурăнаççĕ. Ульмра пĕр уйăх каярах татах тепĕр çĕнĕ госпиталь уçнă. Хулари пĕртен-пĕр больница аманнă салтаксемпе лăках тулса ларнă.

Ĕçме-çиме тĕлĕшĕнчен пурнăç калама çук хĕсĕнсе çитнĕ, нимĕç халăхĕ выçă ларать. Манăн çемье, арăм тата 4 ача — ытти салтаксенни пекех асапла пурăнать, мĕншĕн тесен пособие, вăл пит сахал пулсан та, вăхăтра парса пымасçĕ. Чылайăшĕпе хваттершĕн укçа тӳлемен, арăма ĕнтĕ темиçе хутчен те хваттертен хăваласа кăларатпăр тесе хăратнă.

Çынсем пурте «çуркуннехи наступлени» çинчен калаçаççĕ. Вăл кашнинех хăратать. «Çуркуннехи наступлени» ăнăçлăн вĕçленессине пĕри те шанакан çук. Унран никам та ырри кĕтмест. Ĕнтĕ Германире кашни çемьере нех кам та пулин Российăра вилнĕ.

Баварец калаcа панă сăмахсене саксонец та, нимĕçсен 167-мĕш пехотнăй дивизийĕн салтакĕ Гютлер Хельмут та çирĕплетет. Гютлер Хельмут хăйне мобилизациличчен малтан помещик патĕнче батрак пулса ĕçленĕ. Вăл çапла каласа парать:

«Германире ялхуçалăхĕнче ĕнтĕ тахçантанпах ĕçлекен çынсем çукки палăрать. Çапла пулсан та мобилизаци ĕçĕ пĕр куна та чарăнса тăмасть. Кăçал çулла кам ĕçлĕ ĕнтĕ уйра — паллă мар. Эпĕ ĕçленĕ именире вăрçă пуçланиччен 25 батрак ĕçлетчĕ, халĕ пурĕ те 5 батрак кăна юлнă, вĕсене те ак паян-ыран фронта илсе каймалла. Ытти именисенче ĕçсем çавăн пекех. Акмалли çĕр лаптăкĕ хĕсĕнсех пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçсем татах япăхрах».

— Германи халăхĕ выçăхса çитнĕ, вăрçă ĕнтĕ ăна халран ячĕ, ĕçсем малашне те кун пек пыма пултараймаççĕ, — тесе пĕр саслăн калаcа параççĕ тыткăна парăннă нимĕç салтакĕсем.

Г. КРЫЛОВ.

Минометчиксем

Вĕсем иккĕшĕ те чăваш. Пĕри, И. А. Алексеев,—Елчĕк районĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозран. Колхозра вăл активист пулнă, общественнăй ĕçсенче тăрăшса ĕçленĕ. Хĕрлĕ Çара илсен, хăйĕн ирĕкĕпех минометнăй взвода ямалла ыйтнă. Çавăнпа Алексеев юлташ минометa лайăх вĕренсе çитнĕ, практикăллă занятисенче яланах «отлично» паллăсем илет. Тепри, Р. С. Сидоров юлташ, —Куславкка районĕнчи Кусанар ялĕнчен. Хĕрлĕ Çара киличчен колхозра пилĕк çул хушши пĕр уйăхлăхсăр ревизи комиссин председателĕ пулса ĕçленĕ. Минометчиксен взводĕнче маттур вĕренсе лайăх примерсем кăтартнăшăн Сидоров юлташа старши сержант званине илнĕ.

Алексеевпа Сидоров юлташсем пĕрпĕрне çавтери килĕштерсе туслăн пурăнаççĕ. Вĕсем взводри ытти боецсене минометa тĕллесе тата перес тĕлĕшпе яланах лайăх кăтартусем парса тăраççĕ. Çакна пула тылра вĕренмĕ чухнех минометран тĕл перес тĕлĕшпе вĕсен взводĕнчи боецсенчен 95 процентĕ «отлично» паллăсем илнĕ.

Асăннă минометчиксем халĕ фронтра, фашистсене хирĕç пĕтĕм вăйĕсене хурса пикенсе кĕрешеççĕ. Сидоров юлташ ертсе пыракан минометнăй взвод кашни кунах фашистсен вуншар салтакĕсене пĕтерсе пырать. Ытти çĕршыв-шаллă боецсемпе пĕрлех минометчиксем те пултаруллăн çапăçнипе пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем, ял хыççăн ял йышăнса илсе, фашистсене хĕвеланăçнелле хĕссе пыраççĕ.

Тылра чухне Сидоровпа Алексеев пек ниххăçан енчен те паллă пулман ахаль çынсенченех фронтра маттур геройсем пулса пыраççĕ. Сидоровпа Алексеев пек пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пултарулăхне тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕçе хуракансем вĕсем пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар чаçĕсенче çĕршерĕн, пиншерĕн шутланаççĕ. Çакăн пек боецсем, тăван çĕршыва чĕререн юратса, хăйсене шеллемесĕр, хăюллăн та пĕлсе çапăçнипе Хĕрлĕ Çар хăвăтлăн малалла наступлени туса пырать. Çавсен вăйĕпе тата çавсен пултаруллăхĕпе вăл тискер тăшмана вирлĕн çапа-çапа аркатса пырать.

Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

„Комсомол Чувашии" бронепоезд хатĕр

Шупашкар ĕççыннисен митингĕ

Мартăн 29-мĕшĕ. Шупашкар станцийĕ çулари ĕççыннисемпе тата çывăхри колхозниксемпе тулнă. Чăваш комсомолĕ пуçарнипе мĕнпур чăваш халăхĕ тунă бронепоезда кĕтсе илме пуçтарăннă вĕсем. Акă поезд аякри вăрмантан хăвăк тĕтĕм кăларса тата уççăн кăшкăртса тухать. Пĕтĕм халăх саввăнса алă çупнă тата оркестр марш вылянă вăхăтра бронепоезд станцине çитсе чарăнать.

Бронепоезд çине республикăри парти, совет тата общественнăй организацисен представителĕсем улăхаççĕ. Вĕсем хушшинче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Пивоваров, Матвеев юлташсем, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Сомов юлташ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Андреева юлташ, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Парткотроль Комиссин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Серов юлташ, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕсем П. Михайлов тата Хасьянов юлташсем.

«Комсомол Чувашии» бронепоезда кĕтсе илнĕ ятпа пухăннă митинга парти Чăваш Обкомĕн секретарĕ А. Матвеев юлташ уçать. Хăйĕн кĕске сăмахĕнче вăл пирĕн орденлă Чăваш республикинчи ĕçхалăхĕ, Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле, Германи фашизмне тĕппипех пĕтерессишĕн, çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн пĕтĕм вăйя, пултарулăха хурса ĕçлени çинчен калать.

— Командир юлташ!—тет Матвеев юлташ командир еннелле çавăрăнса.— Сире Хĕрлĕ ялав паратăп. Çак Хĕрлĕ ялавпа—малалла, тăшмана тĕппипех аркатса тăкма, малалла!

Михеев юлташ Хĕрлĕ ялава алла илсе çӳлелле çĕклет.

Трибуна çинче ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ. Бронепоездăн боецĕсене, командирĕсене тата политработникĕсене Чăваш комсомолĕн ячĕпе саламлать вăл.

— Паттăр экипаж!—тет Михайлов юлташ.—Чăваш комсомолĕпе халăхĕ сире хăйĕн пултарулăхĕпе тата вăйĕпе тунă бронепоезда шанса параççĕ. Çак шанчăка пурнăçа кĕртĕр, тискер тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçăр. Эпир сире хамăр енчен фронтри пек ĕçлеме сăмах паратпăр.

— Сирĕн шанчăка пурнăçа кĕртесси пирки ан иккĕленĕр.—ответлă сăмах калать комиссар Тельнов юлташ. — «Комсомол Чувашии» бронепоезд хăйĕн хăватлă вучĕпе нимĕçсен хăмăр сарăнчисене пĕр шеллемесĕр çунтарĕ. Пирĕн вăй çакă броня хуламминче кăна мар, пĕтĕм халăх çĕнтерӳ тума туртăнниче. Эпир çав çĕнтерĕве тăвăпăр та гвардеецсен ятне илме тивĕçлĕ пулăпăр. Ăна тума пире Сталин юлташ пултаруллăн ертсе пыни пулăшать.

Митинг хупăнать. Халăх нумайччен алă çупса тата урра кăшкăрса бронепоезд экипажне саламлать. Оркестр «Интернационал» вылять.

...Каçхине бронепоезд экипажĕпе хулари çамрăксен тĕлпулăвĕ пулса иртрĕ.

Германири инфляци

ЖЕНЕВА, мартăн 28-мĕш. (ТАСС). Рейхсбанк хăйĕн 1941 çулти ĕçĕсем çинчен отчет туса. Берлинра пичетлесе кăларнă. Çав отчет тăрăх, алăра çӳрекен хут укçа-тенкĕсен хисепĕ ытлашши ӳссе кайни курăнать. Алăра çӳрекен укçа-тенкĕн хисепĕ çулталăк хушшинче 5,5 миллиард маркăран 22,3 миллиард маркăна çити ӳснĕ.

Женевăри финансистсем çакна палăртаççĕ: Германи халăхĕн тата Германи тытса илнĕ çĕршывсенче пурăнакан халăхсен пурнăçĕ юхăнсах пынă вăхăтра, вĕсен тавар сутăн илес вăйĕ татти-сыпписĕр чакса пынă условире—алăра çӳрекен хут укçа-тенкĕн хисепĕ ӳсни ĕнтĕ тӳрех инфляци пуçланнине палăртать, теççĕ. Отчет тăвакансем хăйсен отчетĕнчи цыфрăсем ытла хăратсах ан пăрахчăр тесе пытарма пăхаççĕ. Вĕсем «Германийĕн территорийĕ ӳснĕ», «çарвалли ĕç укçи нумай тӳлеме тивет» текелеççĕ. Анчах çапла пулин те, хăйсемех çав цифрăсем инфляци чăннипе мĕнтери пысăк пулнине пĕтĕмпех кăтартмаççĕ-ха, тесе те сӳпĕлтетсе параççĕ. Тытса илнĕ çĕршывсене тата «союзлă» текен çĕршывсене вырнаçнă нимĕç гарнизонĕсем çав хăйсем пурăнакан çĕршывсен укçи-тенкипе пурăннине рейхсбанк уççăнах тенĕ пек йышăнать. Хуçалăх министрĕ Функ хăйĕн ятарласа туха каланă сăмахĕнче «Европăри çĕршывсем Германийĕн тӳлемелли парăмĕсем ӳссех пынипе пăшăрханнине» йышăнса, хăйĕн вассалĕсене «Германия çав çĕршывсен культурипе ирĕклĕхĕшĕн çапăçать» тесе йăпатма хăтланать.

Функ Германин промышленникĕсене «вăрçа ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн» йӳн чĕртаварпа ĕç вăйĕ парăпăр тесе йăпатать, çав вăхăтрах государственнăй хутсем вырăнне промышленнăй акцисем тăвас текенсене хытă айăплăпăр, тесе хăратса та илет.

Германин тĕп королĕсем хăйсен укçи-тенкисене гитлерла правительство аллине памасăр, промышленнăй акцие çавăрма тăрăшаççĕ пулсан, вĕсем те вăрă «вăрçă ăнăçлăн вĕçленесси» шансах каймаççĕ.

Финляндия—катастрофа пулас çул çинче

СТОКГОЛЬМ, мартăн 28-мĕш. (ТАСС). Финляндире выçлăх пĕтĕм çĕршыва çавăрса илнĕ.

«Ока» хаçат çапла çырать: «Пирĕн пурнăç продовольстви енĕпе пит те йывăр. Часах ĕнтĕ вăрлăхăн юлашки запасĕсем те пĕтсе ларĕç», тет.

Çак кунсенче финсен снабжени министрĕ Рамсай пуху пухнă. Унта çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенчен пухăннă 306 делегат пулнă. Çав пухура тухса каланă çынсем макăрас пекех хуйхăрса каланă. Министр Рамсай сăмах майĕн çапла каласа хунă: «Эпир продовольстви енĕпе мĕнле те пулин пулăшу илме пултарасси пĕртте паллă мар. Пĕтĕмпе илсе калас пулсан—хамăра илемлĕ шанчăксемпе йăпатма кирлĕ мар», тенĕ.

Делегатсем финсен правительствине, çĕршыва выçлăхпа юхăнчăк патне илсе пырса тăратнăскерне, питĕ хытă критикăланă. Вĕсен тухса каланă сăмахĕсем Финляндире, уйрăмах та провинцире, выçлăхпа нуша мĕнтери сивĕчленсе кайнине лайăх кăтартса параççĕ. Иулисаари делегат каланă тăрăх, Финляндин нумай районĕсенче темиçе эрне хушши ĕнтĕ çăкăр та, пĕр пĕрчĕ тырă та çук».

«Соумен сосиалидемократти» хаçат мартăн 24-мĕшĕнчи номерĕнче çырса пĕлтернĕ тăрăх, халăх финсен влаçĕсен преступленилле политики пирки тарăхни çинчен Хельсинки бургомистрĕ Кето уççăнах каланă. «Лару-тăру çакăн пек: хуласенче тата халăх пурăнакан ытти пунктсенче продовольстви пĕртте çук»,—тенĕ Кето.

Пуху йышăннă резолюцире—«Финляндире чи кирлĕ продуктсен запасĕсем те çук» тесе кăтартса панă.

Финсен правительстви февраль уйăхĕнчех ĕнтĕ хресченсенчен вĕсен юлашки продовольствине, çав шутрах акмалли вăрлăха та, конфискацилеме тытăннă. Çав запассем мĕнтери сахалли çакăнтан та курăнать: финн хресченĕсенчен вĕсен юлашки тапăк çăкăрĕсене туртса илеççĕ пулсан та, пĕр уйăх хушшинче тырă пит те сахал пухăннă.

Англичансем Сен-Назер базине рейд туни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕш. (ТАСС). Комбинированнăй операцисен штабĕ Сен-Назера мартăн 28-мĕшĕнче ирхине ирех рейд туни çинчен тĕплĕн пĕлтерекен хыпарсене пичетлесе кăларнă. Ку рейда Англин тинĕс-çар флочĕн çамăл вăйĕсем, специальнăй назначени отрячĕсем тата Англин сывлăшри çар вăйĕсем туса ирттернĕ. Çав рейда, пуринчен малтан, Сен-Назер базинчи пысăк доксемпе портри сооруженисем çине тапăнас шутпа организациленĕ.

«Кемпбеллтаун» карап (американецсен «Бачэнэн» эсминецĕ пулнăскер), хăйĕн малти пайĕ çине ятарласа пилĕк тонна взрыв тумалли япаласем тиенĕскер, шлюзсем патне пымалли вырăнсене хӳтĕлекен торпедăсенчен тунă икĕ ретлĕ загражденисене çĕмĕрсе çул уçса пынă, çав шлюзсен тĕп хапхине çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. «Кемпбеллтаунăн» малти пайĕ шлюз хапхисене çĕмĕрсессĕнех, специальнăй назначени отрячĕсем тип çĕр çине анна та малтан палăртса хунă план тăрăх кирлĕ объектсене çĕмĕрме тытăннă.

Çав отрядсем шыв тăкса тăракан станцие, доксене кĕмелли шлюз хапхисене уçмалли механизмсене тата ытти чылай объектсене те çĕмĕрсе тăкнă. Çав ĕçпе пĕрлех торпеднăй катер подводнăй лодкăсен бассейнне кĕмелли вырăн патне икĕ торпеда кăларса янă. Çакăн хыççăн моторнăй катер 4 сехет те 00 минутăра «Кемпбеллтаун» эсминец çинчен унăн командине антарнă. Çав самантра асăннă икĕ торпеда çурăлса каймалли вăхăт çитнĕ. Рейдра пулнă соединенисем вăйлă взрыв сассине илтнĕ, кун хыççăн иккĕмĕш пĕчĕкрех взрыв сасси илтĕнсе кайнă.

Рейд противникăн лагерĕнче паника пуçласа янă. Вăл ним тĕллисĕр-паллисĕр хăйĕн вăйĕсем çине те, операци тăвакăн десантниксем çине те пеме пуçланă. Противникăн 6 дюймлă орудийĕ хăйсен ПВО карапнех, вăл англичансен соединенийĕсене атакăланă чухне, путарнă. Пĕлĕтсем питех те аялта тăнă пирки тата французсен граждăнла халăхĕ хушшинче жертвăсем тăвассинчен сыхланса, сывлăшран бомбăсене нумаях пăрахман. Хăйсем умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртнĕ хыççăн Англи войскисем моторнăй катерсем çине ларса каялла кайма тытăннă. Вĕсем тип çĕр çинчи операцисем тăвакансене хӳтĕлесе тăнă эсминецсен отрячĕпе пĕрлешме васканă.

Противник, пулеметсенчен персе, Англи войскисене чакма кансĕрленĕ, пулмалла. Аякран нимĕçсен 5 торпеднăй катерĕ курăнса кайнă. Вĕсем Англин моторнăй катерĕсем çине пеме тытăннă. Эсминецсем нимĕçсен торпеднăй катерĕсене хăваласа тытăннă, лешсем вара тарнă. Хăйсен базисене таврăнакан пирĕн соединенисене сывлăшран çыранри оборонăн самолечĕсем хӳтĕлесе пынă. Сывлăшра темиçе çапăçу пулса иртнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 30-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ, Сен-Назер çине рейд тунă чухне моторнăй катерсенчен пĕрин çинче пулнăскер, çав операци çинчен çапла çырать:

Каç пулса килнĕ май эпир Франци çыранĕсем патне çитрĕмĕр. Ударнăй отрядсем штурма хатĕрлеме тытăнчĕç. Эпир Луара юханшывĕн варрине кĕтĕмĕр. Çав вăхăтра пире прожектор çутти çутатса ячĕ. Вăл «Кемпбеллтаун» эсминеца ярса тытрĕ. Сасартăк юханшывăн икĕ çыранĕнчен те орудисем пеме тытăнчĕç. Темиçе секундăран чăнкăн тамăк пуçланса кайрĕ. Прожекторсем çине пеме приказ пачĕç. Пирĕн куç умĕнчех пирĕн орудисенчен пĕрин снарячĕ тĕп-тĕлех прожектора пырса тиврĕ.

Эпир палуба çинче, Льюис пулеметсем тăкакан вута вăйлатма автоматсенчен персе тăтăмăр. Ун чухне пирĕн çине снарядсен ванчăкĕсемпе пульăсем çумăр пек тăкăнчĕç. Пирĕн сержант мăшăрлă Льюис пулеметран персе тăчĕ. Ăна уraran тата кăкăрĕнчен амантрĕç, анчах та вăл пеме чарăнмарĕ. Çав вăхăтрах эпир юханшыв тăрăх доксем патнелле куçса пытăмăр. Часах эпир пенипе пысăк тоннажлă виçĕ суту-илӳ карапне вут хыпса илчĕ. Юханшыв хĕрринчи çуртсенче те пушарсем тухрĕç. Унтан эпир хамăр атакăлама паллă тунă объектсем патне çывхарса çитрĕмĕр. Вара эпĕ «Кемпбеллтаун» тӳрех док шлюзĕн хапхи çинелле пынине лайăх куртăм.

Эпир çаплах икĕ çыранран хĕреслетсе перекен вут айĕпе пыратпăр. Мол çумĕпе пынă чухне нимĕçсен салтакĕ пирĕн çине ручной граната вăркăнтарма хăтланчĕ. Манпа юнашар тăракан капитан ăна автоматран персе вĕлерчĕ. Пирĕн ударнăй отрядсен боецĕсем тăшмана хирĕç мĕнле кĕрешнине çыранра çунакан çуртсем çуттипе уçă курса эпир лайăх куратпăр.

Пире прожекторсен çутти хыпашлать, пирĕн çине орудисем хăйсен вутне тăкаççĕ, эпир кукăр-макăрсем туса юханшыв тăрăх каялла таврăнатпăр. Унтан уçă тинĕсе тухрăмăр. Кунта вара хамăр çухатусене пĕлтĕмĕр. Пирĕнне 5 çынна амантнă. Катер корпусĕнче артиллери снарячĕсем тивсе шăтарнă шăтăксем пур. Палуба çинчи мĕнпур сооруженисене пĕтĕмпех пульăсем шăтарса пĕтернĕ. Вăйлăн пырса эпир Бискайски заливран иртсе кайрăмăр. Хамăр пымалли çулран кăштах аяккалла пăрăнса кайнă пирки, эпир операцире пулнă эсминецсене тĕл пулаймарăмăр. Пĕр «Хейнкель — 111» пирĕн çине пикировка тума хăтланчĕ. Эпир пеме тытăнтăмăр. Фашистсен самолечĕ тинĕсе персе анчĕ. Тепĕр «Хейнкеле» персе хăваласа ятăмăр. Каç пулса çитиччен эпир çĕнĕ тапăнусем пуласса кĕтсе малалла куçса пытăмăр. Кайран эпир суднăсен караванне куртăмăр. Ку Англи суднисем пулчĕç. Вара вĕсемпе пĕрле эпир каялла порта çитсе кĕтĕмĕр.

Германин Любек порчĕ çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерствин коммюникинче çапла пĕлтернĕ: мартăн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Германин ытти те кирлĕ порчĕ Любек çине вĕçсе пынă. Порт çине питĕ нумай бомбăсем пăрахнă. Пысăк пушар тухнă. Кунсăр пуçне тата тăшман тытса илнĕ территорийĕнчи ытти объекчĕсем çине те вĕçсе пырса тапăннă. Çав операцирен Англин 12 бомбардировщикĕ каялла таврăнман.

Любек Германин Балти тинĕсĕн хĕвеланăç пайĕнчи чи пахха та кирлĕ портсенчен пĕри пулса тăрать. Швецие Германи хушшинчи суту-илӳ пуринчен ытла çак порт урлă пулса пырать, Германин промышленноçлă центральнăй районне тимĕр руда тата ытти чĕртаварсем тăратасси те çак порт урлах пулса пырать.

Парижри пурнăç

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 29-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Виширен çапла пĕлтерет: мартăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Париж тавралне бомбăсем пăрахнă. Виширен килнĕ çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Парижри пурнăçа каллех вăрçă законĕсене пăхăнтарнă. Хулара çутта маскировка тăвас йĕркене пурнăçа кĕртнĕ. Каç пулса çитнĕ май Париж центрĕ пушă тăрса юлать. Сывлăшран тапăннинчен хăраса час-часах тревогăсем тăваççĕ. Хула çинче истребительсем вĕçсе çӳреççĕ. Нумайĕшĕсем, пуринчен ытла хĕрарăмсемпе ачасем, Парижран пăрахса тухса кайнă.

Югослави партизанĕсем итальянецсен дивизине аркатнă

СТАМБУЛ, мартăн 29-мĕш. (ТАСС). Кунта çакă паллă пулса тăнă: мартăн пуçламĕшĕнче Югослави партизанĕсем итальянецсен Никшиц хулинче (Черногорире) тăракан дивизине пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Партизансемпе итальянецсем хушшинче çапăçу февраль уйăхĕн вĕçĕнче пуçланса кайнă. Партизансем хулана çавăрса илнĕ те итальянецсен командованине парăнма сĕннĕ. Итальянецсем вĕсене итлесшĕн пулман. Çакăн хыççăн пуçланса кайнă çапăçу мартăн 5-мĕшĕнче вĕçленнĕ, итальянецсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Партизансем нумай трофейăсем тытса илчĕ. Çав шутра: 18 танк, 46 оруди, 112 пулемет тата боеприпассем нумай. Итальянецсене хирĕç çапăçнă çĕрте партизансене вырăнти халăхсем питĕ пысăк пулăшу панă.

Югославин çар миссийĕ Америкăна пынă

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 30-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене Югославин çар миссийĕ пырса çитнĕ. Миссие полковник Савич ертсе пырать.

Савич Югослави партизанĕсем Гитлера Югослави урлă чугунçул тăрăх та, урăхла майсемпе те Болгарин пункчĕсемпе çыхăну тытса тăма чăрмантарнине палăртнă. Савич çапла каланă: ĕнтĕ пĕрлешӳллĕ нацисем Югославие çар материалĕсем ытларах парас вăхăт çитрĕ, çапла туни гитлерла оккупантсене хирĕç кĕрешме Югослави партизанĕсене татах та вăйлăрах пулăшнă,—тенĕ.

Делире пулса иртнĕ пресс-конференцире Стаффорд Криппс тунă заявлени

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Делире пулса иртнĕ пресс-конференцире Стаффорд Криппс çапла каланă: ку таранччен пулса пынă калаçусем ăна пĕтĕмĕшпех кăмăла каяççĕ, — тенĕ.

Криппс çакна систернĕ: вăл хăй малтан йышăннă плансенех пăхăнса пырать, Индире икĕ эрне пурăнма шутлать. «Эпĕ, — тенĕ Криппс, — ман сĕнӳсем йышăнма килĕшӳллĕ-и е килĕшӳсĕр, çавна мĕнле майпа та пулин пĕличчен Индирен каясшăн мар. Анчах та ку вăл эпĕ Индире тем чухлĕ вăхăт лăхах юлма шутланине пĕлтермест. Эпĕ çитес 10 кун хушшинче ман сĕнӳсене йышăнассипе йышăнас маррине пĕлсе çитмелле тăвасшăн».

Юлашкинчен Стаффорд Криппс çапла каланă: Англин кабинечĕ Индие панă сĕнӳсем мартăн 30-мĕшĕнче пичетре тухаççĕ, тенĕ.

Криппс Индире пулни

ЛОНДОН, мартăн 30-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен çапла пĕлтерет: Индин национальнăй конгресĕн председателĕ Калам Азад тата Джавахарлал Неру ĕнер Криппспа тăваттăмĕш хут тĕл пулса калаçнă.

Криппс çавăн пекех тата Пĕрлешӳллĕ провинцисен пулнă премьер-министрĕпе тата Бомбей провинцин премьер-министрĕпе тĕл пулса калаçнă.

Ĕнер Криппс Ганди резиденцине пынă. Криппс пынă тĕле Ганди патĕнче конгресс исполкомĕн членĕсем вĕсене ертсе пыракан Калам Азадпа пĕрле пухăнса ларнă.

Май умĕнхи ăмăрту

Ĕç тухăçлăхĕ ӳсет

КАНАШ. Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен уявне — Майăн пĕрремĕшне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленнĕ май вагонсем юсакан заводри стахановецсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Утильцехри строгальщица Потапова, токарь Орлянский тата Глыбчак юлташсем ку таранччен сменăри нормăна 200-шер процент тултаратчĕç, халĕ, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн, 240-шер процент тултаракан пулчĕç. Механически цехри разметчик Керекеза, сверловщик Баданов тата Кашицын юлташсем те хăйсен кулленхи ĕç тухăçлăхне 275 процента çити ӳстерчĕç.

П. СЕРГЕЕВ.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатрĕç

СОВЕТСКОЕ. Укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра тӳлесе татни отечественнăй вăрçă кунĕсенче çĕршыва тĕреклетме питĕ пулăшать. Çакна Турай ялсоветĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тĕплĕн ăнланса илнĕ. Вĕсем май уявне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе, государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокченех тӳлеме тытăнчĕç. Нумайĕшĕсем вăрçă вăхăтĕнчи налога, культсбора, самообложени укçисене пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç. П. Пудова, А. Семенова, Т. Матвеева, В. Семенова колхозницăсен государство умĕнче укçа-тенкĕ енĕпе пĕр парăм та çук.

Ялсовет председателĕ В. Смирнов, финанс агенчĕ Н. Михайлов юлташсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе пултаруллăн ĕçлеççĕ. Çак кунсенче Турай ялсовечĕ пĕрремĕш кварталти финанс планне 138 процент тултарчĕ.

М. СТЕПАНОВА.

„Пионер Чувашии" танк тума укçа пухаççĕ

СĔНТĔР. Комсомолăн «Çĕнĕ Юнга» колхоз çумĕнчи организацийĕнчи комсомолецсем Етĕрне районĕнчи пионерсен пуçарăвне колхозниксене ăнлантарса параççĕ, «Пионер Чувашии» танк тума укçа пухаççĕ.

Комсомол организацийĕн секретарĕ Валя Салдакеева танк тума 50 тенкĕ, комсомолка Е. Малюсева 40 тенкĕ, И. Челыгин комсомолец 30 тенкĕ пачĕç. Организацири комсомолецсем «Пионер Чувашии» танк тума пурĕ 390 тенкĕ укçа пачĕç.

«Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас ĕçе красноармеецсен арăмĕсем те активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем пурĕ 790 тенкĕ пухса пачĕç.

Сĕнтĕр вăтам шкулĕнче 6-мĕш «Б» класра вĕренекен пионерсем «Пионер Чувашии» танк тума кашни 10-шар тенкĕ пачĕç, отряд вожатăйĕ Таня Бурштейн 18 тенкĕ пачĕ. Çавăн пекех районри ытти шкулсенче те «Пионер Чувашии» танк тума укçа пухасси сарăлсах пырать. Шомикри тулли мар вăтам шкул 472 тенкĕ, Мăн Хураçкари тулли мар вăтам шкул—350 тенкĕ, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул—800 тенкĕ пухса панă. Пурĕ районĕпе «Пионер Чувашии» танк тума 3.676 тенкĕ пухнă.

А. ИВАНОВА,
М. АЛЕКСЕЕВА.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Етĕрне районĕнчи пионерсен пуçарăвĕпе «Пионер Чувашии» танк тума районри пионерсемпе шкул ачисем çеç мар, учительсемпе служащисем те укçа пухма тытăнчĕç. Советскинчи вăтам шкул—400 тенкĕ, Хочашри вăтам шкул—450 тенкĕ пухса панă.

С. ИЛЬИН.

* * *

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр., телефонпа). Мартăн 30-мĕш тĕлне районри пионерсемпе шкул ачисем «Пионер Чувашии» танк тума 4457 тенкĕ укçа пухнă. Ку ĕç уйрăмăнах Янкăлчри вăтам шкулта пысăк активлăхпа пулса пырать. Унта икĕ кун хушшинче çак ĕç валли 1020 тенкĕ укçа пухнă. Вĕренекенсем Зоя Николаева, Коля Захаров, Поля Петрова кашниех 10-шар тенкĕ, пĕрремĕш класра вĕренекен Настя Чуканова 5 тенкĕ панă.

«Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас ĕçе учительсемпе ачасен ашшĕ-амăшĕсем те хутшăнаççĕ. Янкăлч вăтам шкулĕн директорĕ Трофимов, вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Ефимов юлташсем танк тума 20-шер тенкĕ, Каганович ячĕпе тăракан колхозри 50 çултан иртнĕ колхозник Иван Елагин 10 тенкĕ укçа пачĕç. «Пионер Чувашии» танк тума Канашри иккĕмĕш номерлĕ шкулта (комсомол комитечĕн секретарĕ С. Будяк юлташ) пионерсемпе шкул ачисем 738 тенкĕ, Анаткас Уçырма тулли мар вăтам шкулĕнчи пинерсемпе шкул ачисем 400 тенкĕ, Сиккасси вăтам шкулĕнчи пионерсемпе шкул ачисем 840 тенкĕ укçа пухнă. Сиккасси вăтам шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекенсем (класс руководителĕ Артемьева юлташ, пионер вожатăйĕ Сверчкова юлташ) танк тума кашни 5-шер тенкĕ укçа панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 [illegible]

ЛТ 34